„Канаш“ хаҫат ҫумӗнђе тухат̆.




№ 1 (11) ЙАНВАР 1926 ҫ. № 1 (11)

# Ҫилли тулса ҫитни.

Макар Йӑванђӑ, копператтив прикашђӗкӗнђе пурӑнса 50—60 тенкӗ шалу илекенскер, пайан темӗншӗн тутисене мӑрт тытнӑ, йулташӗсемпе калаҫмаст̆, тавар илме пыракансемпе сӑмахласшӑн та мар, кӑнтӑрла иртн. пӗр сехетђен пирус 1 пађкӑ, 25 пируслине, туртса йађӗ. Ытти прикашђӑксем: ку Макар Йӑванђӑн мухмӑр пирки пуҫӗ ыратат̆ пулӗҫке, ун пек кам пулмаст̆, мухмӑртан тӗнђере никам та хӑтӑлаймӗ ӗнтӗ тесе, ун кӑмӑлне каймалли сӑмахсем те каласа пӑхаҫҫӗ, пирус парса та хӑналаҫҫӗ, кулса та илеҫҫӗ, анђах вӗсен мыскараллӑ сӑмахӗсем хӑйсене кӑна култараҫҫӗ иккен, Макар Йӑванђа шӑл айӗн те пулин култарса илтермеҫҫӗ.

— Мӗн пулнӑ капла пирӗн ырӑ кӑмӑллӑ Макар Йӑванђӑна, тет пӗр прикашђӗкӗ, сарӑрахскер,—вырӑн ҫинђен сулахай ури ҫине тӑнӑ пули анђах?

— Хуђамӗшпе вӑрҫнӑ пуђ. Ун патне хуђамӗш килнӗђђӗ, тет тепри, хӗрлӗ сухалли.

Миҫе сехет ҫитнине асӑрхаса пурӑнакан пушарниксем Уҫпенски ђиркў ђанне пӗр хут тон ҫапса йађӗҫ. Прикашђӗксене макаҫӑна хупса киле, кӑнтӑрлахи апат тума кайма вӑхӑт. Макар Йӑванђӑ та хӑйӗн кивелерех панӑ, авланиђен пӗрик ҫул малтантарах илнӗ пађтине тӑхӑнат̆ те, ним ђӗнмесӗр макаҫӑнтан тухса кил йенелле утат̆.

Киле ҫитсен алӑксене пуп кӗмелӗхех сарлака уҫса йарса, шалт хупса лартат̆. Унпа пӗрле тултан сив ађисем кӑнкӑвак тӗтӗм йеверлӗ пулса кӗрсе сивӗ пўрте татах сивӗтсе пӑрахрӗҫ.

Ҫӗтӗкрех пађттине хывса пӑрахса сак ҫине ҫатлаттарса хуђӗ те кађђӑмађђӑ уткаласа ҫўреме пуҫларӗ.

Ларђӗ апат ҫиме нимӗн ђӗнмесӗрех. Майри темиҫе хут та, сӑмах пуҫласа йарас тесе, ҫанталӑк сивви ҫинђен, пасара кайни ҫинђен калаҫма тытӑнђӗ. Макар Йӑванђӑ, ҫӑварне шыв хыпнӑ пекех, нимӗн ђӗпмест, илтмӗш пулса шухӑша кайнӑ пек пулса ларат̆.

Иашка хуҫҫӑн икк мӗш тирӗкне (бюдо)—хуратул пӑттине ҫинӗ ђухне майрийӗ:

— Макарушка, теме пайан сивӗ, тимӗр кӑмакине хутса йарсан та пымалла пек ман шутпа, тӗрӗ йӑпшӑнса.

Макар Йӑванђӑ сасартӑк кашӑкне ҫат пӑрахрӗ, ик урри ҫине сикрӗ тӑђӗ

— Есӗ мана шӑнтсах вӗлересшӗни? Арӑми ес? Арӑм мар, ђун илешшӗ! Кӑна пӗлнӗ пулсан сана, майра—ҫаврана, арӑм туса хам хушамата парађђен, ђӑваша, ђӑваш маткине илмелле пулнӑ мӗн. Икӗ ҫул та ик уйӑх пурӑнатпӑр—ман вађђи пӗр йапала та туйапмарӑн. Тумтирсем ҫӗтӗлсе пӗтрӗҫ, кӗҫе атти шӑтӑк, йур кӗрет, макаҫӑна ҫитеђђенех урана тӑм илсе йађӗ. Хӑна вађђи пур! Кашни шалу илмесренех тумланма пӗлетӗн. Ех! Кӑтартӑп еп сана, аскӑнђӑка!...

Халиђен ырӑ кӑмӑллӑ пулнӑ Макар Йӑванђӑ пукан илђӗ те арӑмне хӑваласа ҫўреме пуҫларӗ. Хӑй йӗркерен тухса кайнӑ: йун, йун! Иун кирлӗ мана! Иун, тесе кӑшкӑрса ҫўрет, куҫ-пуҫӗнђен хӗлхем тухат̆, ҫӑварӗнђи сӗлехи пӑхма ҫук хӑрушӑ.

Пулаҫҫӗ ҫав кам-мӗн тӗнђере ҫавӑн пек йӗркерен тухса кайнӑ турӑ ҫырнипе пӗрлешнӗ мӑшӑрсем.

Мами.

# ТĔШМĔШЛĔ ÇЫНСЕМ.

Ҫĕкеç инкен пуйас килнĕ. Ваттисем калана тăрăх, Суркури каç вăл çапла тунă. Такана ăшĕнҫе алă-ура çунă. Кайран çав, алă-ура çунă шывпа ҫуста хурса çăкăр тунă. Çав çăкăра çисен, çын вара хăй сиспесĕрех пуйаť, тет. Анҫах Ҫĕкеç инкен пуйасси-мĕнĕ пулман. Тепĕр вырсарни кун каç ҫиркӳвĕ кайсан унăн шур йапалисене çӳпçи мĕнĕпех çаратса кайнă вăрăсем. Ҫĕкеç инке шухăша кайнă. Те, çавăн ҫухне алă-урама лайăхрах çăваймарăм, те тата шуйтансем, мана пуйтараспăн маршăн, ман йапаласене хăйсемех çаратса кайнă. Пуйма йăвăр çав, тет пуçне кăтăрт хыçса Ҫĕкеç инке.

---

Йарак муҫи, шăнтаканпа выртнă ҫух, шăнтма пуçланине сиссе, каткасем ăшне шыв тултарса лартса, каткасем хыçне пытанса ларнă.

— Мĕн тума кĕрсе лартăн унта, тесе ыйтсан вăл:

— Ан шавла! Ипĕ шăнтакантан пытантăм. Çапла тусан шăнтакан шывран хăраса çын патне пымасť, тет. Кайран çилленнипе ниxăçан та пырса йермест, теççĕ.

— Апла мар,—терĕм еп унтан кулса,—асанне калана тăрăх, кил-йышĕнҫе шăнтаканпа выртакан пулсан, хут çине „çав çав çын (шăнтаканпа ҫирленĕ çын) килте çук“ тесе çырса пĕрене çине çапса хурсан, шăнтакан иртсе кайаť теççĕ, терĕм.

Тепĕр кунне вăл ҫăнах та епĕ каланă пек тунă. Пĕрене çумне „Йарак килте çук, хăнана кайнă“ тесе хут татăк çине çырса çапнă.

Пулаççĕ çав тĕнҫере «пурăнăç тункатисем».

---

«Капкăнăн» 10 мĕш нумĕрĕ çĕнĕ çул кунне тухрĕ. Апла пулсан пирĕн çулталăкĕпех „Капкăн“ кăлармалла пулаť (çĕнĕ-çул кунне мĕн тăван, çулталăкĕпех çавна тумалла пулаť, теççĕ). Йурĕ, ку тĕшмĕше „Капкăн“ хуçи те ĕненет. „Капкăн“ çулталăкĕпех лайăх тухса пырассине ĕненетпĕр, ĕненнине каласа паратпăр.

---

## Çĕнĕ çул каç йумăç пăхни.

Хĕрсем кама каҫҫа кайассине пĕлме çĕнĕ çул каç йумăç пăхаççĕ. Анҫах пăхмалли майсем пурте кивĕ, тĕппипех кăтартса памаççĕ. Кивĕ майсем ахаҫ çынна—ҫухăна йе пуйана, çамрăка йе ватта кайасоине çеç кăтартаççĕ. Халĕ тĕплĕрех кăтартакан майсем те пур. Ҫынлă çынна кайассине те пĕлме пулаť.

Хамăр сăнаса пăхнă тăрăх çак майсем лайăх тесе хĕрсене шантарма пултаратпăр.

1. Кĕмĕл укçа ил те, çĕре пăрах. Çурлаллă йенĕ çӳлелле пулсан—хресҫене кайатăн, çăвĕпех тырă вырмалла килет. Ришки çӳлелле ӳксен—коппертатив претçетатгĕлне кайатăн. Коппертатив укçине салатса пĕтернĕшĕн ăна тĕрмене решуткă хыçне лартаççĕ.

2. Йĕркипе ларăр та, пурне те выҫанă ҫухнехи пек пĕр-пĕрин патне çӳрĕр. Камра карт нумайрах пулаť, вăл хĕр çекреттаре каҫҫа кайаť

3. Çурçĕр тĕлĕнҫе уйа çул тăваткалне тухса выртса итлемелле. Шăнкăрав сасси илтĕнсен—ораттăра каҫҫа кайаť, йăтă сасси илтĕнсен—пит йатлаçакан çынна кайаť, йурланă сасă илтĕнсен —ӳсĕр тийеҫука каҫҫа кайаť.

---

Йăкăнат Павăлĕн салтака кайасси килмен. Вăл, ваттисем калана тăрăх, шапшурă лаша çине утланса, шапшурă кĕçепе, шапшурă тумтирпе сĕвек (асамат) кĕперри витĕр тухасшăн пулнă. Çапла тусан арçынтан—хĕрарăм пулаť, хĕрарăмран—арçын пулаť, теççĕ. Анҫах Павăлтан нийепле те Кулине пулайман. Сĕвек кĕперри, Павăл хăваланă çемĕн, малалла тарса пыраť, тет. Арçынран хĕрарăм пулма йăвăр çав! Тухтăрсем ăна тума пултараççĕ теççĕ те, анҫах вăл ыраттармасăрах пулаймасť пулмалла.

---

Тĕшмĕшлĕ çынсем çинҫен вăрăм йумах йарса кăтартма та пултаратăп та епĕ, анҫах... Анҫах пӳртре пугек пур ҫухне йумах йарсан пугекĕн пуç çаврăнакан пулаť, теççĕçке.

Йван-м и.

# ЕНТИП ПАВĂЛĔ.

Ентип Павăлĕ пурăннă тĕнҫере.

Арăмĕ пулнă, аҫисемпе йытти, тырă пурисем пушах йанклатарса ларнă.

Ҫапла ĕнтĕ Ентип Павăлĕн хулана кайса телей шыраса пăхас килнĕ.

Шухăшланă—тунă.

Кÿршĕ ҫыннинҫен 50 пус кивҫен илсе йара парат̆ хуланалла хĕллехи ҫулпала.

Ҫитрĕ хулана.

Тÿрех савăта ҫитрĕ.

— Хăшĕ кунта сирĕн Ҫи Асли? тесе ыйтат̆.

Ҫи Аслине ăҫтан кайса мĕнле тупмаллине кăтартса паҫĕҫ. Павăл ун патне пырса тăрса:

— Турă пул, ĕҫ тупса парха, тет.

— Ес сойусра тăратни? тет Асли.

— Мĕнле сойус?

— Ну, еппин, калăпăр, пĕрлешÿре тăратни?

— Ма тăмастăп? Тăратăп. 15 ҫул ĕнтĕ хамăн арăмпа, Кулинепе, пĕрлешсе пурăнатпăр. Пурăнатпăр та пурăнинҫен усси ҫукпа пĕрех.

Асли кулса йаҫĕ те каларĕ:

— Вăл мар. Еп сапа профсойус ҫинҫен ыйтатăп.

Павăл вăрăмăн сывласа илҫĕ те калат̆.

— Ун пеккине пĕлместĕп.

— Ҫапла ҫав, тет Асли, малтан сойуса кайса ҫырăнса кил, кайран вара ĕҫлеме кĕртĕпĕр.

Аслине канаш панăшăн тав турĕ те, вĕҫтерҫĕ сойус патнелле.

Ҫитрĕ.

Сойус ун кăмăлне карĕ. Ҫутă, ăшă. Иĕри тавра уйри шăрҫăксем пек майра хĕрсем шăлгăртаттарса лараҫҫĕ машшинккисеме.

Илемлĕ майрасем. Тирпейлĕ.

Нĕрин патне пырат̆ те, вăл ыйтат̆:

— Калаха, хĕрĕм, мĕнле ман сойуса ленкес?

— Ес ăҫта ĕҫлетĕн? тет майра.

— Халĕ епĕ ниҫта та ĕҫлемен, пайан авҫах йалтан килгĕм те, тет.

— Вăл ҫаплах ҫав ĕнтĕ, терĕ хирĕҫ майра,—малтан пĕрнĕр вырăна кĕрес пулат̆, кайран вара сойуса ҫырăнăн.

Ентип Павăлĕ ырă кăмăллă канаш панăшăн майра хĕрне тав турĕ те, тухса карĕ урама. Тамлă йупи ҫине углакса ларса шухăша карĕ:

# Йал пуйанлăхĕ.

Ес авланас тесессĕн,
Хĕр суйлама пĕлсессĕн,
Пирĕн йала пыр та кĕр,
Ӳснĕ кунта хĕрсем вĕт!
Пĕрин йаҫĕ Хветуҫҫа—
Кĕтсех тăрат̆ хапх уҫса,
Тепри хитре Укҫине—
Пăхтаратех хăй ҫине.
Кÿршĕ хĕрĕ Марине
Лартат̆ йалан хăй ҫумне;
Маттур, хитре Алтатйе
Ӳснĕ ҫăнах телейлĕ.
Хура куҫлă ҫав Туппа—
Пырсах тăрĕ сан умна.
Ăслă мари ҫав Сухха—
Тĕрĕс тытат̆ сăмаха.
Вилнĕ теҫҫĕ Михаҫук,
Ун арăмĕ Сăпаҫук
Тухса каҫҫа кайас тет,
Ҫамрăк каҫҫă вăл кĕтет.
Пĕҫĕк пиҫҫе Иринен
Вилнĕ ҫыру килеймен,
Унăн хитре арăмĕ
Пымăп, тесе каламĕ.
Хветке хĕрĕ Хветкулла
Лайăх арăм пулмалла:
Пĕвĕ-сийĕ илемлĕ,
Ҫын кăмăлне каймалла.
Ăса кĕнĕ Елехҫук,
Аплах марҫĕ ĕлĕк ҫух,
Тулли, самăр сăпайлă,
Арăм тума пит майлă.
Хамăн савни Униҫҫе
Ҫĕрĕ, сулă, перҫетке
Паҫĕ мана темиҫе.
Ҫаҫек тийен Кăраҫук,—
Унтан хитри йалта ҫук!
Пуйавĕҫке пирĕн йал—
Нумай кунта хитре хĕр,
Хĕр шырама тухсассăн
Пирĕн йала пыр та кĕр!
Ыттак йалне тупмасан
Пĕлĕн есĕ каласан,—
—Йалăн йаҫĕ Шурапиа,
Шыра-та тул ҫав йатпа;
Тĕлне-йĕрне каласан
Ҫасах тупăн шырасан
Хура вăрман хыҫĕнҫе
Тархан шывĕ хĕрринҫе.

Н. Евтокимăв.

---

— Кам вĕсене пăтратса йанă, тет. Аптрамалла. Кунта шухăшласа ларни вăл усаллă та, анҫах хырăм выҫҫи систерет-ҫке!

М и.

# ЙӲҪҪИ.

Йалсенҫе русски корки ерехпе суттӑвакансем нумайланҫӗҫ.



— Пӗре тытӑннӑ ӗҫе пӑрахма хӗн ҫав. Ӗлӗк сӑмакунккӑпа суттӑваттӑм, халӗ «вырӑс йӳҫҫипе».

Арҫынсем мана та ман «йӳҫҫине» те йуратаҫҫӗ.

## Шӑтӑк пуҫ.

Раштавра икӗ ҫын пит хытӑ ҫапӑҫнӑ урамра. Кӑсем ҫапла ҫапӑҫнине тепӗр ҫын курсан, вӗсем патне ҫупса пырса, тытӑнаҫ вӗсене ҫарма,—пӗрне те, тепӗрне те ҫапма ирӗк памасҫ. Ҫав вӑхӑтра тӳпелешекенсенҫен пӗри, кӑна ҫапма ирӗк памантан ҫиленипе, пит хытӑ сӑптӑрса йарса, кунӑн пуҫне шӑтарса пӑрахаҫ. Кӑсем ҫапӑҫнине ыттисем те курсан, ҫасах тӳпелешнӗ ҫӗре пыраҫҫӗ те, кӑсене ҫара пуҫлаҫҫӗ. Малтан ҫарма тытӑнийӗн пуҫне ҫапса шӑтарса пӑрахнине курсан, ыттисем ӑна шеллесе ҫасах хӑйсен йалӗнҫи лекӗр (тухтӑр) патне тӳрлетме илсе кайаҫҫӗ тухтӑрӗ кунӑн пуҫне шӑтарнине курсан:

— Ҫимӗр халӗ, кунӑн пуҫне шӑтарнӑ иккен унӑн пуҫ мимине сийӗн туманши, ҫипертерех астӑвам, тет.

Ҫав вӑхӑтра шӑтӑк пуҫли те.

— Тухтӑр, манӑн пуҫа кӑлӑхах ан пӑх та, унта манӑн мими ҫуктӑр, мими пулсан, епӗ тӳпелешекен ҫынсем патне ҫупса пырса хам пуҫа хам шӑтарттарман та пулӑттӑм, ӗҫсе те ҫӳремӗттӗм, тет.

Ив. Йурккин.

## „Капкӑн килнӗ, вӗт, йала“

Шӑнкӑр-шанкӑр шӑнкӑртаҫ  
Йала пуштӑ килнӗ пек,  
Мӗскерши тесе курма тухсассӑн—  
«Капкӑн» килнӗ, вӗт, йала!  
Урлӑ-пирлӗ пӑхсассӑн  
Тытса ӑна курсассӑн  
Пупсем, кулаксем шак хытрӗҫ—  
«Капкӑн» килнӗ, вӗт, йала:  
Ҫамрӑксем пӑхса йулҫӗҫӗ.  
Кулаксем, ах тур, терӗҫӗ  
Пупсен сехрисем хӑпнӑ—  
„Капкӑн“ килнӗ, вӗт йала!  
Ей есӗ, пулӑшу комиттеҫӗ,  
Сахалрах кӑна алхасха!  
Халех сана ҫаклатаҫ  
«Капкӑн» килнӗ, вӗт, йала!  
Ей, есӗ, коппэраттив,  
Нумай ан ӗҫха шерпетне  
Ҫемҫетӗ шӑллу тымарне  
«Капкӑн» килӗ, вӗт, йала!  
Ей, есӗ, найан йалсовет,  
Ӗҫӳ мӗнле пӑхса тух!  
Ҫаклатаҫ сан хӳрӳне—  
„Капкӑн“ килнӗ, вӗт, йала!

## Пур йенҫен те айăплă.

Ҫăвашпроисвотсойус хресҫенсене кĕтесле панă спйенлĕ лашасен хакĕсене ўкертерес тĕлĕшпе комиҫҫи тăваҫҫĕ. Комиҫҫинҫе уҫассăри акрономсем, выҫăх тухтăрĕсем.

— Ну, сан лашу мĕнтен айăплă, ҫирлĕи? тесе ыйтаҫҫĕ пĕр шĕвĕр сухаллă ҫынтан.

— Айăплă ҫав, пур йенҫен те. Суха патĕнҫе лайăх пымасť, тапаť, ҫыртаť, кĕҫенет, ҫынна тыттармасť.

— Апла айăплă пулаťиха сан лашу? Ун пек айăпсене...

— Сире каласа ĕнентерме хĕн. Хаҫ кăна каларăм, вĕт! Айăпĕ нумай.

— Ҫирлĕ мари, тетĕп, сан лашу?

— Ҫирлĕ мар... е, ҫирлĕҫҫĕиҫ! Пĕҫертсе пăрахаť...

Утик.

## Хуҫашшĕпе кинĕ.

Авал пĕр Уймăл йатлă кукпа, пысăк сăмсалă кинĕпе иккĕш ҫавҫах пурăннă, тет. Акă вĕсен пĕрре авăн ҫапмалла пулаť. Ирхине ирех кинĕ тула тухса кĕрет те. Хуҫашшĕ ăна:

— Киҫ, пайан кун уйари? тет.

Кинĕ ăна хирĕҫ.

— Уйар пек, Уймăл пек, Уймăл пуҫĕ кукша пек, тет?

— Хуҫашшĕ хурланса, ку мăшкăла йепле тавăрас, тесе ҫўрет. Акă пĕрре вăл пасара кайаť. Пасартан таврăнсан кинĕ хапха уҫма ҫупса тухаť те:

— Ати! пайан мĕн хаклă, мĕн йўн, тет?

Пысăк сăмса ҫĕр ҫирĕм пус, тесе каларĕ тет хуҫашшĕ.

Шелепи.




## „Капкăнран" хăраҫҫĕ.

— Ех, Иăван, пăхха кунта. Пире те ҫтена хаҫаҫĕ ҫине ўкернĕ. Камши ăна?

— Ан та шарла! Латнă «Капкăн» ҫине кĕртмен.

Хурҫăка Петĕр.

# Раштав хыҫҫӑн Халӑх сутне пынӑ сайавленисем.

1. „Ситимĕр манӑн хӑлхана ҫыртса татрĕ. Епĕ ӑна, ҫӑва тĕпне каймански-ре, нимĕн те тумаҫке, сутйе тус! Тӑп тӑнӑ ҫĕртех (хӑй ӳсĕр) ман пата пыђĕ те: е-е, есиха ҫав мана тĕлĕкре хĕнекен, тет. Пĕрех ҫутӑлтарса йађĕ. Питкуҫран хĕлхем тухса карĕ. Ҫав вӑхӑтра манӑн темĕншĕн ҫĕре пĕкĕрлмелле пулђĕ. Тӑрсассӑн пӑхатӑп,—ман хӑлхана Ситимĕр ҫыртса илнĕ. Ҫавӑншӑн ӑна катӑрка йарӑр“.

Ђупай вулӑс ҫынни Љђаваҫ.

2. „Ситимĕр ман ҫинђен сайавлени панӑ, тет. Вӑл суйаť. Хӑй мана вӑл хĕнерĕ. Сӑмсаран ҫапрĕ те, сӑмса кукӑрлсах карĕ. Мĕнле пурӑнас ĕнтĕ сӑмсасӑр? Сӑмси манӑн ҫынсен пек мар, пит илемлĕђђĕ. Ҫавӑншӑн ӑна 100 тенкĕ штраф тӳлеттерĕр, штраф укҫине хама парӑр. Сут ун майлӑ пулсассӑн такҫан та пулсан еп ӑна тавӑрӑп-тавӑрӑпах. Ҫӑкӑр тӑвар хире-хирĕҫ, теҫҫĕ“.

Хыптар Клемукĕ.

3. Ман упӑшкана вĕлерђĕҫ. Кам вĕлернине пĕлместĕп. Йалта пысӑк ҫапӑҫу пулђĕ,—пĕр 50—60 ҫын тӳпелешрĕҫ. Тахӑшĕ вĕлернĕ? Упӑшкам та вĕреҫехђĕ. Ађампӑђамсем урай тулли. Тархасшӑн ҫемйене пенҫи парӑр. Ахалĕн ађамсем выҫӑ вилеҫҫĕ. Вилнĕ упӑшкам вырӑнне урӑх упӑшка тупасси ҫинђен шухӑшламалли те ҫук, еп ун пек ҫын мар, ҫийĕнђен тата, епĕ ватӑ, 55 ҫул тултарса 56 ҫне кайнӑ“.

Вилнĕ Урӑхха арӑмĕ Крахвина.

4. „Питимĕр арӑмĕ пирки ҫунса карӑмӑр. Йĕҫкĕрен таврӑнсан вӑл хунар ҫутса сурӑхсем пӑранланине пӑхма тесе выђӑх картине кайнӑ. Темĕн хӑйаматран такӑннӑ та, ӳсĕрскер, ҫĕре тӑсӑл-

Сӑпаҫипӑ куккукне
Ҫиђ ҫӑмарта тунӑшӑн.
Сӑпаҫипӑ савнине
«Капкӑн» илсе панӑшӑн.

## Йалхуҫайстви выстӑвкинђе.



— Ђӑхки манӑн пит хастарђĕҫке. Пĕрмайах ҫӑмарта тӑваť. Вӑл тунӑ ҫӑмартапах пупсене тӑрантаратпӑр, милитсисене хӑналатпӑр, хвершӑлсене ахаљ тутаратпӑр...

са выртнӑ. Аллинђи хунартан улӑм тивсе кайнӑ. 2 кил тĕпĕ йĕрĕпех ҫунса карӑмӑр, вĕт, ҫаппа-ҫарамас йултӑмӑр. Ҫавӑншӑн Краҫукпа упӑшкине те, ађипӑђисене те Ҫĕпĕре йама ыйтатӑп. Сана ĕнтĕ, сутйе, вҫаткӑ мĕн параймастӑп, мĕншĕн тесен ҫуннӑ хыҫҫӑн хамӑр та аран-аран сывлӑш ҫавӑркалатпӑр, ахаљ ђухне пулнӑ пулсан....

Хыткан Павӑл.

5. Манӑн упӑшкам Ђалӑш Ваҫли йатлӑ. Мана ҫураҫнӑ ђухне вӑл: сана алӑ ҫинђех йатса ҫӳрĕп, ҫиленсен те йатламӑп, вӑрҫма мар, кађа пӳрнепе те пырса тĕкĕнмĕп, тетђĕ. Халĕ, Раштав кунĕсенђе, кашни кунах манпа вӑрҫрĕ. Ђышаť тата, шуйттан, алли ҫыҫманскер! Халĕ ĕнтĕ епĕ унпа уйӑрлтӑм. Хама хĕненĕшĕн сута паратӑп. Вӑл йӑвӑр аллипе ҫапса тунӑ муклашкасем тӳрлениђђен сутне туса пĕтерме ыйтатӑп. Сутйе, есĕ тархасшӑн ман майлӑ пулса ҫав упӑтеке вирлĕрех айӑплаха. Унщӑн сана ахаљ тумӑп“...

Мĕлке Кулини.

ЙӐВАН-М-ЂИ ҫырса илнĕ.

## Симĕс кайăк—пуçана.

Кĕркунне йалти çынсем пурте пехех кĕр мăнтăрĕпе тыр пулă праçникне ĕçкĕ-çикĕпе уйавласа ирттерме йуратаç-çĕ. Пĕр 30 çул ĕлĕк ку праçниксене сăрапа анҫах, теме йураҫ, асăнса, ҫунĕсене йурăсемпе савăнтарса ир-тереҫҫĕç. Пурăна пыра çутти те сăрапа хутăш кайа пуçларĕ, кайран çĕнтерме те тапратрĕ.

Сăмакон та пĕр самана хытă ахăрҫĕ.

Кăçал пĕр праçникне йала карăм.

Хăна пухăннă ĕçкĕ-çикĕллĕ пӳрте кĕтĕм.

Йурланипе ташлани хушăра пĕри—пуçĕ патне пынăскер талпаса çаптараҫ:

— Такки, такки такана,
Симĕс кайăк—пуçана,
Вĕçрĕ тухрĕ йăвинҫен,
Сăхрĕ илҫĕ сисеҫҫен.
Хĕрлĕ шлепку айĕнҫе
Каçăр пуçĕ тем пехех,
Вуткăвар пек ăшĕнҫе
Сĕлехийĕ пыл пехех.

Татах та нумай такмакларĕ, пурне те астуса çитерирас çук. Ăна тепри тагса каларĕ.

— Мур çименнĕскер—ҫун çийет. Хуласенҫе, пасарсенҫе уйрăм-уйрăм ашкăнаҫ, иртен çынна сăхма тапратаҫ, сывлама та памаҫ персех антараҫ.

— Сивĕ ҫире лектерет, çапах та кирлĕ йапала. Кирлĕ пулҫĕ—ҫупрăн карăн,—илсе те килетĕн. Пĕр тухăмĕнҫе хатĕр, çырма хĕринҫи лаçсенҫе тĕтĕм кăларса ларни мар, тет пĕр ватăрах кăвак сухаллă çын.

Малтан пуçлаканĕ каллех йурлаҫ: такки такки, такана, симĕс кайăк пуçана... Хуçи арăмĕ кăна итле итле, тутисене шăл çумне хупаймасҫ. Хăнине ҫерки ҫеркипе тыттараҫ.

«Симĕс кайăк» ури çинҫе тăми пулҫĕ.

Ĕçкелесен мĕн тусан, «симĕс кайăк» тухса сулăнҫĕ: çырма урлă пуçани патне кайап, терĕ.

Тепĕр кунне илтетĕп: «Симĕс кайăк пуçана» текенскер йалти пуçани патне çитеймен, теççĕ, кĕпер айне кĕрсе кайса ҫиперех ăнтăрканă пулнă тэ, анҫах шкултан çпектаккăҫтен таврăнакан комсомолсем курса йала сĕтĕрсе хăварнă. «Симĕс кайăк» сиктерет, пулас.

Н. Шупуççынни.

## ЕЛХЕРЕЙ ХУЙХИ.

Тимухха елхерей тул çутăлнă çутăлманах ҫашлаттарса çитрĕ хура лашипе Таниле елхерей патне. Хăй шап-шурă шуралса кайнă хăранипе. Аллинҫе портфĕл, Портфĕлне 166-мĕш нумĕрлă «Канаш» ҫикнĕ. Кĕнĕ кĕменех: Танил! тесе тискер сасăпа кăшкăрса йаҫĕ.

Вăл пынă вăхăтра Таниле вырăн çинҫен те тăман. Таниле сасартăк вăранса кайса нимĕне те пĕлмесер тӳшек çытарне ывăтса йаҫĕ çĕрелле.

— Пĕтрĕмĕр, вĕт, тет кăшкăрса Тимухха. Ырă курмалли кунеем çухалҫĕç. Капла...

Таниле: мĕн-мĕн? терĕ те вырăн çинҫен тăрса Тимухха çумне пырса ларҫĕ

Тытăнҫĕç халапланма.

Танил, есĕ пĕлмен пулмалла пирĕн хуйха. Епĕ пĕртте куçа хупман кĕçĕр. Ыйхă килмест. Ак çак 166-мĕш нумĕрлĕ «Канашра».

Таниле тăруках шуралса кайрĕ.

— Мĕн, ҫиркӳсене хупмалла туни мĕн?

— Вăл марха. Пирĕн самăй аслă пуп И. Афанаçйĕв пупран тухнă.

— Ну-у! Ак, тамаша!. Вăл пиртен те кĕçĕнех марҫĕ нумайах. Тухнă еппин? Ну-кă ăçтаха? Вуласа пăхăм. Вулаҫ: «епĕ 20 çул ытла тĕрлĕ шкулсенҫе вĕрентекенре пурăнтăм»... Ҫийе çав: 20 çул ытла пупра пурăннипе кăтартман «Йулашки 3 çул хушшинҫе пупра пурăнни мана хам йуратнă ĕçе туса пыма ҫарса пыҫĕ» (мĕнле ĕçе йуратнă ĕç тесе калаҫши вăл?) «çавăнпа пуп ĕçĕ никама та усăсăррине курса, халĕ епĕ пупран тухатăп. Протойерей пулнă çын И. Афанаçйĕв».

Вăт, тепе на!...

— Халăх турра манса пĕтĕ ĕнтĕ. Епĕр суйнине Афанаçйĕвсем йăлтах тăр шыва кăлареç. Хурах! тесе йăванса кайса тăнсăр пулаҫ.

Тимухха халĕ сывмар выртаҫ. Афанаçйĕв хуларан пырсан:

—Епĕ вăхăтлăха кăна пупран тухрăм. Ман вырăва урăх çынна ан лартăр, тесен çеç Тимухха елхерей хăй ҫирĕнҫен сывалнă.

УТИК.

# „Капкăн“ хуҫин кĕнђелеринђе.




## Ҫĕнĕ виҫесем.

Ҫĕрпӳ хулинђи выђăх тухтăрĕ В. А. Пилеттăв ҫĕнĕрен тараса пукаt.ёсем шухăшласа кăларнă. Е. К-н ҫырса пĕлтернĕ тăрăх:

Вăл килограм вырĕ̆нне, кирпĕђ крамăсем тунă. Ҫавăя пех кирпĕђ тĕпренђĕкĕсенђен тунă кирĕсем ун пĕр хутаҫ туллийех. Пур амаљсене те вăл кирпĕђ кирисемпе турттарса парать, тет.

Наукка тем те тăвĕ. Ҫĕнĕрен йапала шухăшласа кăларакансене награтă параҫҫĕ те, анђах куншăн награтине те парĕҫ, те памĕҫ.—Уйесри сывлăх пайĕнђен илтсе пĕлмелле.

## Ҫветтуй сывлăш.

Ахаљ мар пуљ ҫав ҫветтуй сывлăш хăватлă, теҫҫĕ.

„Мами вулăсĕнђе Ађакасри ђиркӳ старăсти ђиркӳ сăрлама тесе халăхран 4500 тенкĕ йахăн укҫа пухнă та хăйне ваљђи ђаплă пӳрт туса лартнă, халĕ пӳрт тунă йатпа ђаплă ĕҫкĕ тунă.“

Ҫветтуй турă укҫа пуҫтарттарать, ҫветтуй хăватлă «хăватлине» ĕҫтерет, ҫветтуй сывлăш йурăхсăрсене тăрантарса ăшăтса усрать.

Йĕлме касрăм, кĕсле турăм
Аша кĕрсен калама,
Илсе йулăр „Капкăнне“
Кулас килсен вулама.

## Покослов.

Шупашкарти Покровски ђиркӳ пупĕ Иавăш йалне тырă-паранкă пухма пырсан Улпут Йеххĕмонне кĕнђеле аври ҫумĕнђен ҫăм кĕнђели вăрласа тухса кайнă, тесе ҫырать пĕр ҫын.

Вăл пуп „ан вăрла“ тенĕ 8-мĕш саповĕт вырăнне „ҫăварна карса ан йул, тенĕ саповĕте шухăшласа кăларнă еппин. Маттур покослов!

## Шупашкар ђаплă хула.

Пирĕн Шупашкар хули кулен-кунах ђапланса пырать, иккен. Пурăнсан-пурăнсан вăл, Меккă *) вырăннех пулса тăрĕ.

Йетĕрне уйесĕнђи Нурăс копперативĕнђе ĕҫлекен Корђакин йатарласах Шупашкара республĕк „курма“ килсе копператтив укҫине 20—30 тенкĕ пĕтерсе кайнă.

Йурать! Шупашкар усламҫисем пуйђăр тата. Шупашкара никам та килекен пулмасан выҫсах вилĕҫ тата усламҫăсем.

## Шуйтанран хăраман теђук.

Ку ĕҫ Ђĕмпĕр кĕпĕрнин Йалавар ђăваш йалĕнђе пулнă. Касхине арманта хресђенсем шуйтан ҫинђен йумах йарса ларнă. Вĕсемпе пĕрле пĕр Аљакка

*) Макомет тĕнне тытакансем хăйсен турри не пуҫҫапма тесе Меккă хулине ҫӳреҫҫĕ.

йатлă тет̧ук пулнă, епĕ шуйтансент̧ен ним те хăрамастăп, молитвă çеç калатăп, теселарат̆.

Йумахха йарсан, йарсан хресет̧енсем пурге килелле саланса пĕтнĕ, пĕр Ат̧акка тет̧ӳк çеç ырап авăртса йулнă.

Тата айалти хутĕнт̧е Ат̧акка сисет̧т̧ен, тепĕр йĕкĕт йулнă.

Пăртакçă тăрсан хай йĕкĕт, айала анакан шăтăкран Ат̧акка вăрăм аркинт̧ен йарса илнĕ те айалалла турта пуçлат̆.

— Мĕн тăвас? Ат̧акка тет̧ук молитвă калама тытăнат̆; пĕтĕм молитвăсене пĕтерт̧ĕ, шуйтанĕ çапах йамаст̆, айалаллах туртат̆. Тет̧ук пуçне çаплат̧ шухăш пырсе кĕрет: автан авăтсан шуйтан тарат̆, теççĕçке. Тет̧ук та автанла ки-ки-ри-рик тесе, кăшкăрса йарса тепле ĕçĕрĕнсе армантан тухса тарат̆.

Вара мĕн киле çитет̧т̧енех ки-ки-ририк тесе кăшкăрса пынă. Киле çитсен Матвине: Машшă алăк уçха! Ки-ки-рири-рик! тесе кăшкăрат̆, тет.

Çакăн хыççăн Ат̧акка хăранипе т̧ирленĕ, т̧ирленĕ çĕрте те аташса ки-ки-ри-рик, тесе кăшкăрса вырта т̆ тет.

## Суйеççĕ комсомолĕс.

Песупинскири РÇЛКС йат̧ейккин т̧ленĕ (Патăрйел у.) Алексактр Екорăв пирĕн пата ийулĕн 13-мĕшĕнт̧е çапла çыру йанăт̧т̧ĕ: «сирĕн пата 4 тенкĕ те 23 пус укçа йатăм, çав укçашăн есĕр ман пата çапла-çапла йатлă кĕнекесем йарăр».

Укçине кĕтрĕмĕр кĕтрĕмĕр. Ыран килети, пайан килети, çĕрле килети, кăнтăрла килети?—Çук. Нимĕн тума пĕлмесĕр пот̧та айăплас терĕмĕр. 6 уйăхран тин вара Екорăв комсомолĕс пире улталанине туйса илтĕмĕр.

Ех, Елексăнтăр шăллăм! Çамрăк пуçпах улталама вĕрентĕни? Ну, вĕренни йурĕçке! Çамрăкла вĕренеймесен ватăлсан вĕренме хĕн пулат̆. Ант̧ах суйупа тĕнт̧е витĕр тухăн, кайалла таврăнаймăн, тенине ан ман.

## Майсăр çынна кушак пăхма та йураман, теççĕ.

Сиккасси вулăсĕнт̧и Сухăр çырат̆:

Кив-Шелтемри Хура Т̧ыкан Иаванне хăйĕн ывăлĕ, Иакур йатлăскер, хĕнесе пуçне çурса пĕтернĕ. 80 çулхи старика хĕнет̧т̧ен унăн хăйĕн пуçне çапса çурмалла, тет.

Хăйне хăй хĕнемĕ ĕнтĕ вăл, Сухăр тус! Ман шухăшпа ăна сут умне ант̧ах тăратмалла. Пуçне çапса çурсан йун тухма пултарат̆. Йун кăларсан хăвах суга лекме пултаратăн.

## Таксă.

Шăмăршă вулăсĕнт̧и Т̧уткасра хут пĕлекенсем пит сахал пулмалла.

Унта Васли йатлă ăстаçă пур. Пĕр сайавлени çырса панăшăн вăл Хветке Никанурне пĕр теçеттин ыраш вырмарнă.

Ку ĕç çулла пулнă ĕнтĕ. Хĕлле çыртарас пулсан мĕн туса памаллаши ăна? «Капкăна» лекиттерниппех çырлахмаст̆ пут̧.

## Вăтанман çын.

Пĕри çырат̆:

„Йанварĕн 15-мĕшĕнт̧е, касхине, Шупашкарти пот̧тă кантурне кĕретеп те, пот̧тăра ĕçлекен Каранин Й. вилес пек ӳсĕр ларат̆. Пурне те илтмеллех матерщинăсем каласа вăрçат̆. Хĕрсем, хĕрарăмсем çав сăмахсене илтсен, вăтанса карĕç“ тет.




Хĕрарăмсем вăтанаççĕ те, ант̧ах Каранивĕ вăтанмаст̆çке. «Капкăна» çаклансан вăтани ант̧ах.

> **Кĕпер айне анас мар,**
> **Куркасăр шыв ĕçес мар,**
> **10 пус укçа шеллес мар**
> **„Капкăнсăрах“ йулас мар.**

# „Ватăлнă кунсенҫе“.

Кават вулăсĕнҫи Шăхалре 55 ҫулхи старикпа 53 ҫулхи карҫăкăн труках виҫĕ хĕр ҫуралнă.



— Хăҫан кăкăр парса пĕтерем сире. Пĕрне панă ҫухне—тепри макăраť. Ҫерете ҫырăнăр! Ҫеретсĕр кăкăр памастăп!

## Паллă шалăпă.

„Капкăн“ пуррине ҫынсем кăна мар, ĕнесем те пĕлеҫҫĕ иккен. Ĕнисем кунтисем мар тата. Пелепей кантонĕнҫи Пишпулек йалĕнҫи ҫăваш ĕнисем. Вĕсем ҫыраҫҫĕ (ҫĕрнисемпе пулмалла):

„ Епĕр питех тĕ наҫар пурăнатпăр, мĕншĕн тесен пирĕн йалта ăратлă вăкăр ҫук. Тăрантарасса питĕ наҫар тăрантараҫҫĕ, ҫавăнпа есĕ, „Капкăн“ хуҫи, пире йепле пăхса усрамалли ҫинҫен, мĕн-мĕн ҫытарсан епĕр сĕт хушма пултарни ҫинҫен хресҫенсене тăнлантарма Миххейĕв акрома хушха, теҫҫĕ.

Капкăн хуҫин ресољутси: Мĕн калас сире, майракаллă йулташсем? Авалхи ҫынсем калаҫҫĕҫ: пăрушĕ ҫинĕ ҫух, ĕни пăр та ҫулаť, тетҫĕҫ. Халĕ апла мар та, анҫах... Ҫăвашсем тĕттĕмҫке. Ну йурĕ, сирĕн шалăпа выљăхсем хушшинҫе ҫи ăслă ҫын—акроном патне йарăпăр.

## Йĕпе ҫанталăк.

Шупашкарти хăш-хăш уҫрештенисенҫи пуҫлăхсем рассыљнăйсене кĕҫе-ату парасса пама йураť те, анҫах вĕсем ăшăрах ҫанталăк пулсан, кĕҫе атăпа урисене йĕпетме пултараҫҫĕ, теҫҫĕ.

Пирĕн шутпа унтан хăрамаллийех ҫук. Рассыљнăйсем, урисене мар, пырĕсене те йĕпеткелеҫҫĕ, анҫах ҫирлесех каймаҫҫĕ.

## Киввине асăнакан.

Шăмалак вулăсĕнҫи (Патăрйел у.) пĕр йалсовет претҫетаттĕлĕ пухура хăйĕн ĕҫĕсем ҫинҫен сўтсе-йавнă ҫухне ҫапла каласа йанă: кам киввине асăнаť, ăна пăҫăртатса татсах илмелле, тенĕ.

Ай-уй! киввине асăнма йураман мĕн! Епĕр асăнтăмăр. Пĕреллĕхе каҫармĕши йалсовет?

## „Сурăх тирне тăхăннă кашкăр“.

Ҫавашпайторкăн Вăрнарти макаҫан пуҫлахĕ Константин Иванҫă хайĕн тăванĕсене макаҫăн йаҫĕпе услам тутарать. Тата унăн майри ҫăвашсене пĕртте йратмасть.

(Пал хыпарĕ).

Макаҫăн макаҫăнах. Макаҫăна халăх пымасăр пулмасть. Ҫăвашĕ те, вырăсĕ те, тутарĕ те тавар илме пырать. Макаҫăн сутти ирĕккĕн сутса хăтланакан усламҫăсенҫен вăйлăрах пулмалла, таварĕ те унта кăшт йӳнерех сутăнмалла. Ку ытти макаҫăвсенҫе ҫăнах та пулĕ, анҫах Вăрвартинҫе кун пек пулма пултараймасть.

— Мĕншĕн?

— Пуҫлăхĕ Константин Иванҫă; унăн тăванĕсем нумай: пĕри пиҫҫĕшĕ, тепришăлнĕ, виҫҫĕмĕшĕ йысна тени, тăваттăмĕшпе пĕрле ларса „Красный восток“ ĕҫнĕрен пĕлĕшленсе кайнă, тата ур. те. Пурте вĕсем сутă тăваҫҫĕ.

— Константин Иванҫă, турă пул: налук тӳлесрен хăтар, макаҫăн йаҫĕпе услам тусан епĕр воҫнăй сутă тунине никам та пĕлмест, вара налук та тӳлеттермеҫҫĕ, тесе йăпатаҫҫĕ „тăванĕсем“.

— Йурать, тăвансемпе килĕштерсе пурăнвине ҫитмĕ... Константин Иванҫ вĕсене сутă тума хăйĕн ҫунатти айне илет.

Ҫапла Ҫавашпайторк сутти вырăнне „Ивановсен“ сутти пулса тăрать.

— Мĕншĕн тавар хаклă ,тесе ыйтаҫҫĕ тавар илме пынă ҫăвашсем.

— Тавар хакне епĕр тумастпăр, Пайторк хăй пĕлсе тăвать тесе хурать Константин Иванҫ.

Хăшпĕр ҫăвашсем Константин Иванҫа алă пырса параҫҫĕ. Кăна курсан унăн майри шăлне йĕрсех вăрҫать:

— Не вигал штоҫ ҫувашскуйу морту и их кряасные руки, тет.

— Мĕн тăвасха, йуратнă маткам: алă парас килмесен те парасах пулать, вĕсене хирĕҫ каймалли ҫук, мĕншĕн тесен вĕсен хăйсен республĕкĕ, пирĕн иккĕнĕн республĕк пулнă пулсан, вĕсем ҫине куҫ уҫса та пăхас ҫукҫĕ. Халĕ вĕсемпе урлă кайсан мана вырăнтан сирпĕнтереҫҫĕ, вара иксĕмĕр те пыл каткинҫен тухса ӳкетпĕр, ҫуллă икерҫĕсем ҫийейместпĕр, ҫейне те сахăрсăр ĕҫмелле пулĕ...

Кăна илтсен майра ҫăрăнарах парать, ирлăхран тухса ӳкес килмест пулмалла. Анҫах ҫапах та сăйра хутра ҫĕтĕлкелесе илмесĕр ҫăтаймасть.

Аллисем „т а с а“ ҫав. Константин Иванҫа „таса“ аллине ҫăвашсем таса мар алăсем парса вараласран сыхламалла. Унсăрăн вăл ҫирлеме те пултарĕ. Кăна Ҫавашпайторкăн асăрхамалла пулмалла. Пайраш К.

---

## Правлени саҫҫетанинҫе.

— Каснаҫей отҫоҫĕ ҫумне мĕн хушса калама пултараттăр?

— Кам хушма пултарĕ ĕнтĕ. Каснăра укҫа тухайман пулсан, каснаҫейсăр пуҫне кам хушса хума пултарĕ ĕнтĕ.

---

## Йăвар ҫĕклем.




— Ма ҫыхлантăмши ку кулакпа. Кивҫен илнĕ пĕр пăтшăн темиҫе пăт тӳлеме тиврĕ. Ой ой йăвăр! Ыршăпакартасем тухса кайаҫҫĕ пуҫ капла...

Манăн тутăр пит нумай
Ҫĕнтĕрлеки пĕрре ҫех.
Ҫăвашсен шурнал 2—3 пур
Кулăшлийĕ пĕрре ҫех.

# «КАПКĂН» словарĕ.

**А.** Аванс. Аванс тенĕ сăмах «аван» тенĕ сăмахран тухса кайнă. Укçа кирлĕ пулсан ухрештенк пуçлăхĕ сана хĕрхенсе, шалуран тытса йулмалла укçа парсан, пит те аван ĕнтĕ. Шалува вăхăтра тӳлемен ӳухне те аванс тумлакĕсем выçă вилесрен сыхласа усрама пултараççĕ.

**Б.** Батрак. Патрак тесе ӳăвашсем ӳас хуçăлакан (патрак) йапалана калаççĕ. Вырăссем тарçăсене патрак теççĕ. Тарçă вăл ӳăнак та патрак йапала. Ытлашши ĕçлеттерсе вăйхăватне пĕтерсен патрак тӳсĕмĕ хуçăлса кайаӳ те, вăл вара патраӳкома шалăпă параӳ.

**В.** Венеция. Шупашкарта Уçпенски ӳиркӳвĕ хирĕç ларакан вырăна калаççĕ (ресторан). Унтан ӳас та ӳасах йĕрни те, шăл шатăртаттарни те илтĕнет.

**Г.** Грам. Гарасапа улталамалли виçе (метр виçи). Ахаӳ усламçăсем тарасапа турттарнă ӳухне тавара 1 крам та пулин (ӳĕрĕк оçмушкăран сахалрах) вăрласа йулаççех, метр йĕркипе турттарнă ӳухне ытларах вăрласа йулма тăрăшаççĕ.

**Д.** Дезертир. Вăрçă вăхăтĕнӳе теçертир тесе фронтран хăранипе теçинтери ӳирĕпе ӳирлесе кайнисене калаӳӳĕç. Халĕ ун пеккисем çук ĕнтĕ. Ĕçрен пăрăнса кирлĕ мар ӳухнех комантировккăна çӳрекенсем пур вара.

**Е.** Ересь. Йерĕç тесе пĕрпĕр суйа сăмаха калаççĕ. Ак калăпăр, меншевиксен сăмахĕсене йерĕç теме йураӳ.

**Ж.** Женский вопрос.—Хĕрарăм ыйтăвĕ, Вăл ыйту пуринӳен ытла пĕрпĕр хĕр аӳа тусан сиксе тухаӳ.

**З.** Завком. Хуçасем, тата хăш-хăш атминистраттăрсем йуратман тискер кайăк.

**И.** Империализм.—Ĕççынписемшĕн импĕр пекех йуçĕ йапала.

**К.** Канцелярия.—Тепĕр майлă канитеӳзариа, теççĕ. Хăш ӳухне унта, ахаӳ лараӳӳен кĕрĕк аркине те пулин йăвала тенине аса илсе, кирлĕ-кирлĕ мар хутсенех çырса ларкалаççĕ.

**Л.** Ликвидатор.—Хут пĕлменнине тĕп тунăшăн шалу илсе тăракан çынна калаççĕ. Хăш ӳухне тата, ликвитаттăрăн пĕлменлĕхне тĕп тума тепĕр ликвитаттăра тытмалла пулаӳ.

**М.** Монах.—Каӳака йеверлĕ йапала. Монахсем кирпĕӳрен йе йăвăçран тунă мăнастир çурӳĕсенӳе пурăнса иртереççĕ. Тăранасса вĕсем—çынсен айванлăхĕпе тăранса пурăнаççĕ. Пуçĕсем майракаллă мар, пуш витре йе пукан йеверлĕ. Хӳрисем хура, тилĕ хӳри пысăкăш.

**Н.** Ноль. Кассăра мĕн ӳухлĕ укçа пуррине кăтартакан ӳихвăр.

**О.** Обмен. Тытăнкăлăрах калаçакансем, опмен тейес вырăнне, опман тесе йараççĕ. Опмен тени те, опман тени те пĕр йапаланах пĕлтереççĕ.

**П.** Портфель.—Пур çĕре те саралнă ӳир.

**Р.** Ревизия.—Тар ӳарне йертекен йапала.

**С.** Секретарь.—Уӳрештенирн çекретсене пĕлекен çын.

**Т.** Тридцать рублей.—Рассыӳнайсемшĕн ӳи паха йапала. Çак йапалана парассине вĕсем кĕтеççĕ, апӳах чĕтсе илеймеççĕ.

**У.** Утюг.—Хĕртмелли йапала. Раштав праçникĕнӳе нумай йалсеӳи çынсем пĕрпĕрне уӳуkласа тухнă, тет.

**Ф.** —Ӳăваш писсаттĕлĕсемпе шурналиссем хушшинӳе тавлашу кăларакан саспалли.

**Х.** Ханша. Çын ăсне арпаштарса йаракан йапала, пуп майлăскер.

**Ц.** Центр. Ӳăваш респуплĕкне пулăшу парса тăракан ырă кăмăллă йапала.

**Ч.** Четверть. Шалу илсен ĕçмелли нормă.

**Ш.** Шарлатан. Ку сăмаха икĕ пайа уйăрса куçармалла: шарла-тан. Епĕ аслă çынсемпе пĕр тан (ах) тесе шарласа (шавласа) çӳрекенсене шарлаттан, теççĕ (камăн итлеме хăлхи пур, илтĕр!).

**Э.** Элемент.—Икĕ тĕрли те пулаӳ: пĕри—пуршуаçиллĕ, тепри—пролеттарлă елементсем. Самана улшăннă пирки, пуршуаçиллĕ елементсем пролеттарлă пуласшăн тăрăшаççĕ, лайăх вырăна кĕрсе ӳкнĕ пролеттарлă елементсем тата (пурте мар та) пуршуаçи йеверлĕ пурăнма та хатĕр пулмалла.

**Ю.** Юстиция. Халăх укçине çаратакансемшĕн пулсан пит тискерлĕ йапала. «Капкăнра» ĕçлекенсемпе туслă.

**Я.** —Епĕ—çакна çыракан.

Йăван муӳи мыскараçă.

# ПАВАР-КАССИ ШКУЛĔНҪЕ.

Павар-касси (Ҫураҫăк вул) шкулĕнҫе путексем усраҫҫĕ. Питĕ ирсĕр, шкула шăршлантарса пĕтереҫҫĕ.
Виç-куç.



Вĕренекен аҫа. Уҫиттĕл И., каҫакисене, сурăхсене пӳртрен хăваласа кăларма ирĕк парха. Шăршлантарса пĕтереҫҫĕ шкула.

Уҫиттĕл. Сан ĕç çук унта. Ес ху та, сурăх пекех, нимĕн те пĕлместĕн.

Каҫаки. Мекекек! Манăн та, вĕренес килет. Ме ек, уҫиттĕл!...

---

## Пуçлă ыйткалакан.

Ыйткалакан пĕр пуйан çуртне ыйткалама пырса кĕрет. Пуйанăн çыннисем кăна курсан, куллен пынăран:— есĕ пирĕн патра ĕнер те, виçĕм кун та, тăватăм кун та. куллен тенĕ пек, килетĕн-çке? теççĕ. Йепле пĕртте вăтана пĕлместĕн? тесе каламасăр.

— Килмесĕр, тет, ыйткалаканĕ те... Хăр ман патма пĕртте пымастăр, епĕ çавăнпа сирĕн патра килетĕп-те, тет.

— Сан патна унта мĕн тума пымалла? теççĕ, лешсем те кулса.

— Мĕн тума пырасси мĕнĕ, тет хăйсем пек кулса, епĕ сирĕн патра мĕн тума килетĕп, есир те ман патма çавăншăн пырăр! тет.

Ив. Йурккин.

## Сăлтавĕ аван.

Ĕçкĕ çынни куллен кун ерех ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳреме йуратнă. Йалĕнҫи çыннисем, кӳрши-аршисем вăл çапла куллен-кун ӳсĕр çӳренине курса: ку йепле куллен кун ерех ĕçет-ши?,.. йепле пĕртте тăрана пĕлместши тесе, унтан тĕлĕннĕ.

Йал çынни пĕри, ерех ĕçменни, ăна, шелленĕ пек пулса, тытăнвă ӳкĕтлеме.

— Итле халĕ, ырă çыннăм, мĕншĕн есĕ капла куллен кун ерех ĕçсе ӳсĕр çӳретĕн? йепле пĕртте ҫарăна пĕлместĕн?... Ку усал йăлăна есĕ пăрах! Унсăрăн есĕ ниçта йурăхсăр çын пулăн, тет. Ӳсĕрĕ те ăна хирĕç:

— Куллен кун ĕçесси-мĕнĕ, епĕ мухмăр анҫах тӳрлететĕпçке, тет, хуйхăрса.

Йурккин.

## Çынсенӗҫен уйрӑм,

Пӗр мухтавҫӑк хӑй валли пӳрт кӑмаки тутарма шухӑшласан, кӑмака тӑвакана ҫӗнсе пырса, унтан:

— „Итле халӗ, кӑмака тӑвакан, есӗ ман пӳрт валли кӑмака туса парӑна“? тесе ыйтрӗ, тет.

— „Парап“, тесе каларӗ тет, кӑмака тӑвакан та.

— „Туса парасса парӑн та, есӗ анҫах манӑн пӳрт кӑмакине мӗнле те пулин çынсенӗн кӑмакисӗнҫен уйрӑхларах ту“, тет хуçи.

— „Йепле урӑхларах“? тет ку та ӑнланаймасӑр.

— „Мӗнпе те пулин çынсенӗнҫен урӑхларах пултӑр“, тет хуçи.

Кӑмака тӑвакане пӑртакçӑ шухӑшласа пӑхса тӗҫӗ тет те:

— „Йурӗ, туса парӑп, çынсенӗнҫен урӑхларах пулӗ“, терӗ тет.

Хуçи килне кайсан, ку, кӑмака тӑвакан ӑсти пӳрт кӑмакине пӳртӗн тул йенне турӗ хуҫӗ, тет те:

— „Епӗ пӳрт кӑмакине туса пӗтертӗм, аҭа йепле тунине пырса пӑх!“ тесе хуçине кӑмака курма ҫӗне пуçларӗ тет.

— „Йепле, çынсенӗн пек туса памарӑна?“ тесе ыйтаҭ тет хуçи кунтан.

— „Çук, çынсенӗн пек тумарӑм“, —тет ӑсти.

— „Апла пулсан, аҭа халӗ еппин йепле тувине пырса курам“, тет те иккӗш çӗнӗ пӳрт кӑмакине курма тухса кайрӗç.

Пӳрҫӗ ӑшне кӗрсе пӑхсан, кӑмакине курмасан:

— „Кӑмаку санӑн ӑçта“? тесе ыйтаҭ тет хуçи те кӑмака тӑвакан ӑстинҫен.

— „Пӳртӗн кӑмакине епӗ тул йенне туса лартрӑм“, тет ӑсти.

— „Мӗншӗн апла унта туса лартрӑн“? тесе, ыйтаҭ тет хуçи, тӗлӗнсе.

— „Мӗншӗн тӑвасси мӗнӗ, çынсенӗн пек тума ху хушмарӑн-çке, çавӑнпа епӗ пӳртӗн кӑмакине çынсенӗнҫен мӗнпе те пулин уйрӑм тумашкӑн, йури тул йенне туса лартрӑм, тет.

## Ал тасатмалли.

— Инке, мӗншӗн сан аллу хупхура?

— Çӑкӑр çӑраймарӑм. Çӑкӑр çӑрсанах шуралаканҫӗ те-ха..

## Улах ларни.

Пӗтӗр-пӗтӗр пӗтӗрмелле,
Пӗлтӗрхинҫен иртермелле
Çирӗм пиллӗк хутӑрмалла
Çӗтӗк çурӑк саплмалла.
Тӑпӑр-тапӑр ура тапсан
Хӗрсен кӑмӑҫ тек пулмалла;
Ники-ники хут купӑспа
Пӗтӗм хӗре ташлатмалла....
Çапла-капла тек шавласа
Мӗн пур çамрӑк улах лараҭ,
Хӑйсем тӗлӗн тек савӑнса
Кула-кула ахӑлтатаҭ....
Ёххӗм-еххӗм тек ӗсӗрсе
Картҫӑк выртаҭ кӑмак çинҫе,
Çамрӑк хытӑ шавланипе,
Хӑйӗн ыйхӑ вӗçнипеле,
Пуçне хыçаҭ тармакласа,
Куçне уçаҭ ҫавкаласа,
Ҫӗлхи калаҭ мӑкӑртатса.
Хӑш-пӗр ларан хӗр-упраçсем—
Апай, выртах тек лӑпланса,
Айакунтан тӗртмеспӗр те,
Мӗншӗн вӑрçан еçӗ пире?
Тесе хӑйсем кулаççӗ те
Пӗр пӗрне тӗртелеççӗ..
Акӑ килҫӗ пӗр çӑмӑлçах,
Алӑк урлӑ каçрӗ анҫах
Йаҫӗ ташша мӗн пур вӑйпах:
„Ухти-нухти темесен те
Хӗрсен ҫунӗ хускалмасҭ те,
Лӑппи—лаппи ташламашкӑн
Лапӑ аҫа мар епир те,
Урай хӑми шатӑртатаҭ,
Кантӑр вӑрри ҫӑмӑрки пек,—
Хӗрсен тути мӑрт марг таваҭ
Ен килнӗшӗн çиленнипе,
Тесе хытӑ култарҫӗ те
Кӗрсе ларҫӗ пӗр хӗр çумне;
Хӗрӗ тӗртрӗ ҫавсипеле—
Кайах усал манран, терӗ.
Аҫа пӗртте хурланмасӑр,
Хӗре тӳртӗн пӗр пӑхмасӑр
Утса кайрӗ тӗпелерех,
Туртса кӑларҫӗ пӗр кӗнеке,
Кӑппи—каппи-кап „Капкӑнне“...
Ахӑлтатрӗç, алӑ çупрӗç,
Кӑп—кап хыпма тата хушрӗç.

К. Екорӑв.

Вулакансем, çитес уйӑха „Капкӑн“ илмесӗр ан йулӑр
Хакӗ 10 пус.

# „КАПКĂН“ САТАҪҪИСЕМ.

## Саспаллисен сатаҫҫи 2-мĕш №.

Акăш, рак, çăрттан
Пĕр лав туртма тытăннă,
Хăйсем пур те çав лавран
Кӳлĕ майлă çыхăннă,
Туртаç, туртаç виççĕн тан—
Сикмест те лав вырăнтан!
Лавĕ йăвăрах та мар,
Ҫуптарса çеç каймалла,—
Анҫах туртни латлă мар:
Ракĕ ҫакаĭ каялла,
Акăш вĕçет çӳлелле,
Çăрттан ҫăмаĭ кӳлелле,
Кам тӳрĕрех вĕсенҫен
Пĕлеймĕпĕр пит ҫасах
Лав çапах та сикеймен--
Пайан куя та çавăнтах.

Çак хурапа çырнă саспаллисенҫен ваттисем каланă сăмах тумалла.

## Саспаллисене улăштарса лартмалли сатаҫă.

| | | | |
|---|---|---|---|
| с | с | р | р |
| ш | ш | к | к |
| у | у | и | а |
| а | а | а | а |

Çак саспаллисенҫен 4 сăмах тумалла: пĕремĕш сăмахĕ выҫăх йатне пĕлтерет, тепри—çын йаҫĕ, виçĕмĕш—„Канашра“ çыраканăн псевтонимĕ (вăрттăн хушамаҫĕ), тăватăмĕш ҫеретлĕ тумалли ĕç. Çав сăмахсенҫи саспаллисене çав кĕлеткăсем ăшне кĕртсе лартсан, çӳлтен айалалла вуланă ҫухне те, сулахай йенҫен сылтăмалла вуланă ҫухне те пĕр пек сăмахсем пулса пыҫҫăр.

## РЕБУС.



Çак май тытса вуламалла.

## „Капкăнăн“ 10-мĕш нумĕрĕнҫе çапăннă сатаҫсен тупписем.

### Хĕрес сатаҫи.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | с | | | |
| | | с | а | п | | |
| | с | а | х | а | р | |
| с | а | х | а | р | и | н |
| | п | а | р | а | м | |
| | | р | и | м | | |
| | | | н | | | |

Çак сатаҫăн туппине çак йулташсем тĕрĕс шутласа каларҫĕç: Никитă Коҫтсов (Шĕнерпуç вул.), Афанаçи Сороккин (Мăнал вул.) Петр Никантăрăвпа Васили Çеменăв (Кавал вул.). Туппине тупнăшăн вĕсем патне укçасăрах 3 уйăхлăх „Капкăн“ йаратпăр.

### Саспаллисен сатаҫи.

Ку сатаҫăн туппи çапла: „аҫи ҫипер те, сăмси пыҫҫăклă“.

# КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

— М. Шмеҫова. Есӗ ҫыратӑн: Вӑрнар стантсинҫе йӑтӑсем питех те нумайланса карӗҫ, шутласа пӑхсан сурӑхсенҫен те ытларах пулмалла, тетӗн. Тӗрӗсрех шутласа тухха. „Капкӑн“ тӗрӗс шутланине йуратать.

— Сӑнӑна. Есӗ ҫыратӑн: «Уҫйанӑвскӑри повышенный типлӑ ҫӑваш петтехникуме Наркомпрос нормаҫӗнйӑ петтехникум тумалла постановлени йышӑннӑ, тетӗн. Ай-уй! Мӗнле тӑнланас? Ҫӑваши есӗ, вырӑси? Пирӗн шухӑшпа есӗ ҫӑваш та мар, вырӑс та мар, ҫурмалла ҫеҫ пулмалла.

— Шуйтан-кӗвентине. Пит хӑрамалла сан псевтонимӑнтан. Шуйтан кӗвентине курни мӗн есӗ?

## „КАПКӐН“ ВУЛАКАНСЕМ!

— „Капкӑн“ ҫинҫен мӗн шухӑшлатӑр,—ҫырса йарӑр.

— „Капкӑнра“ мӗн-мӗн килӗшет, мӗншӗн килӗшет?

— Мӗн килӗшмест, мӗне тӑнланаймастӑр? Мӗншӗн кӑмала каймарӗ?

— „Капкӑн“ ҫинҫе тата мӗнле ыйтусем ҫинҫен ҫырсан лайӑх пек туйӑнать сире.

◆ ВУЛАР! ◆

ТӲРЛЕНӖР! — СЫХЛАНАР!

## „КАПКӐН“

ИЛМЕ АН МАНӐР!

## 5 КИЛЕ ПӖР „КАПКӐН“

П У Л Т Ӑ Р!

Капкӑн хакӗ пит йӳнӗ—уйӑхне 10 пус анҫах

(«Канашпа» пӗрле 55 пус)

◆ КУЛАР! ◆

Ответ. редактор Арк. Золотов.

Чувашлит № 408 Чебоксары, Тип. „Чуваш. Книга“.